Иванов. Бухарин лартнӑ. Бухарин ку ӗç çинчен темиçе хутчен ӗçе, уйӑрман илсен, Кирова вӗлеррӗмӗ хыççӑн, темиçе хутчен тӗ калаçрӗ. Вӑл Киров çине пени—пӗччен тунӑ терроррла ӗçсем кирлӗ результатсем паманнине, терроррла ӗçе массӑлӑн тума хатӗрленме кирлине кӑтартӑ, çавӑн чухне çеç пирӗн хамӑр тӑвас тени пулӗ, тесе каларӗ. Вӑл парти руководителӗсене вӗлерсе пӗтересси çинчен кӑтарту пачӗ.

Вышинский. Хӑвӑрӑн сӑтӑрлă ӗçсем çинчен мӗн каласа пама пултарттӑр?

Иванов. Епӗр кулакла восстани тӑвакан ушкӑнсене, чи малтан Архангельск тавра пустарнӑ, интервенци вӑхӑтӗнче Архангельск хамӑр çӗршывӑн тӗн-магистралӗсеме çыхӑну тытассине тата, çак вӑрмана районӑ, кирлӗ порта англичансене туртса илме çӑмӑллатас шутпа çак ушкӑнсене чи малтан Архангельск таврашӗнче пустарнӑ. Епӗ сӑтӑрлă ӗç тунӑ чухне, вӑрман хатӗрлевне техникӑна хӗçпӑшаллантарасшăнне, тепӗр тӑвакан строительствăна, уйӑрмах хут промышленнăçне аркатас тӗлӗшпе тунӑ. Епӗ çапла сӑтӑр тунипе çӗршывра хут сителенкӗçĕр пулмала тӑвас, культура революцине вăйсăрлатас, çӗршыва тетрадсем тăратассине аркатас, çапла вара халăха совет влаçĕне кулешми, ăна йӳратми тăвас тĕлĕшпе тунă.

Вышинский пана ыйту çине ответлесе, айăпланакан Иванов хăй Бухаринпа 1937 çул пуçламĕшĕнче йӳлашки хут тĕл пулни çинчен калаç:

— Епӗ Бухарина унчухнехи пек тискер, хăйар пулнине нихăçан та курман. Вăл ман çине сиксе укрĕ, „есĕр хăвăрçă, есĕр мана хисеплеместĕр“, есĕр „массăсене“ майлă пуласшăн, сылтăмсен организацийĕ массăсене хирĕç вăрçăна тухнине сирĕн пĕлмеле, терĕ.

Вышинский. Вăл массăсене хирĕç вăрçашăн пулнă?

Иванов. Çапла. Малала вăл çапла ыйту лартрĕ: сылтăммисенчен уйăрăлса кайăксенсем пур пулсан, совет влаçĕ умĕнче ухăнсе, пирĕн сылтăмсен организацине тăрă шыв çине кăларма пултаракан-сене пĕтĕрес тĕлĕшпе хăйăлăн ӗçлемелле.

Вышинский (Бухарина). Иванов Сӳрçӗр-Кавказа кайнă, есĕр ăна сылтăмсен вăрттăн ӗçлекен ушкăне организацилес тĕлĕшпе ӗçлеме заçанă панă. Тĕрĕс-и?

Бухарин. Тĕрĕс.

Вышинский. Вăрттăн ӗçлекен ушкăн тума-и?

Бухарин. Вăрттăн ӗçлекен ушкăн тума.

Вышинский. Есĕр ăна çак организацине тума май 1928 çулта çăварăн чылай заданисене пурнăçа кĕртме хушшине çирĕплеттĕр-и? Сылтăммисене пухасси çинчен çеç мар, çавăн пекех кулакла восстани тăвакан отрĕадсем организацилесси çинчен сăмах-пынă-и?

Бухарин. Епӗ ку ӗçĕн техникине тĕплĕн пĕлмен.

Вышинский. Епӗ восстани тăвакан отрĕадсене организацилес техника çинчен калаçтăр, восстани тăвасси çинче тăракан сылтăмсен платформи çинчен калаттăр. Есĕр Иванова вăрттăн организаци тума хушнă чухне восстани тăвакан отрĕадсем çинчен калаçу пулнă-и?

Бухарин. Çав вăхăтра пулман, пулма та пултарайман.

Вышинский. Вăрттăн ӗçлекен организацисем мĕн тумала пулнă?

Бухарин. Вăрттăн организацисен партине хирĕç кĕрешме вăй пухас тĕлĕшпе ӗçлемеле пулнă.

Бухарин 1928 çултах Иванова контрревољуцилĕ заданисем панине тĕпчече, Вышинский йӳлташ Бухаринпа Иванова чылай ыйтусем парат.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, есĕр Иванова сирĕн умра сылтăрисен центрĕ лартнă задачă—восстани тăвас ӳхăма организацилесси тăни çинчен каларăр-и?

Бухарин. Вăл çапла анланма пултарна.

Вышинский. Айăпланакан Иванов, есĕр çапла анлантăр-и?

Иванов. Епӗ директивăна ӳççăн илнĕ, унăн шухăшне анланма çăмăл пулнă. Кулаксем совет влаçĕ çине тарăхни çинчен ыйту лартнăччĕ. Епӗр шанма пултарнă социалла сий—кулаксем пулнă. Пирĕн задачă восстанийĕ йĕртсе пырасси пулнă.

Вышинский. Бухарин, есĕр çакна çирĕплететтĕр-и?

Бухарин. Ку тĕрĕс, анчах Иванов йĕнĕпе мар. Епӗ кун çинчен урăх çынна калана. Епӗ кун çинчен Иванова калама пултарайман, мĕншĕн тесен 1932 çулта Иванов Сӳрçӗр Кавказра пулман.

Вышинский. Есĕр Сӳрçӗр Кавказран хăçан тухса кайнă?

Иванов. Сӳрçӗр Кавказран епӗ 1931 çулхи апрелĕн иккĕмĕшĕнче йĕ пĕрремĕшĕнче тухса кайрăм.

Вышинский. Сӳрçӗр Кавказра пулнă вăхăтра Бухаринпа хăçан калаçна есĕр?

Иванов. 1928 çулта.

Вышинский. 1932 çулта повстанчествă çинчен калаçнисем пулнă-и?

Иванов. Пулнă ун пек калаçусем.

Вышинский. Итог тумашкăн ирĕк парăр. Иванов тата есĕр (Бухарин йĕннеле çăварăнса) кăтартса панисем тăрăх пăхсан, пĕрремĕшĕнчен, есĕр повстанчества организацилесси çинчен Ивановпа калаçнă икченне çирĕппĕн палăртнă, тесе шутлама пулать. Çапла-и ку?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Иванов кăтартса парат: троцкиссем, сылтăмла группировăсем тата националисла группăсем хушшинче блок пур иккенне епӗ сиртен пĕлтĕм, тет. Кăна тĕрĕс тесе çирĕплететĕр-и есĕр?

Бухарин. Ăна епӗ тĕрĕс тесе çирĕплететĕп.

Вышинский. Иванов тата иттисем капиталисӑмла çĕршывсемпе иртерĕнĕ калаçусем çинчен пĕлнĕ-и есĕр?

Бухарин. Çапла, вăл чылай кайăрахпа пулнă. Епӗ ăна сылтăмсен центрĕн тулашри политикăлă организацийĕ çинчен каласа патăм, ăна епӗ совет влаçне хирĕç кĕрешес ĕçре вăрçă конъюнктурине усă курма йӳрани çинчен, тата иттинумай йăпаласем çинчен те каларăм.

Вышинский. Ураххла каласан, хăшпĕр йӳтçĕршывсенчи государствăсен пулăшăвĕ çине шанасси çинчен-и?

Бухарин. Çапла, ун пек калама та йӳрат.

Вышинский. Ураххла каласан, ССР Союзне пулас вăрçăра çĕмĕрсе тăкасси çине орийентировкă тытни пулать ĕнтĕ вăл. Çапла-и?

Бухарин. Пĕтĕмĕшпе пĕрле илсе, тепĕр хут калатăп—çапла.

Мартӑн 3-мӗшӗнчи каçхи лару

Айӑпланакан Крестинскине допрос тухи.*)

Председатель Уçрăх. Айăпланакан Крестинскине допрос тума пуçлатпăр.

Вышинский. Крестинскине допрос тăвичченех малтан, айăпланакан Раковскине шӑйтусем пама ирĕк парăр-ха мана.

Председатель Уçрăх. Пожалуйста, **Вышинский.** Айăпланакан Раковский, хăвăр, тунă преступленисемшĕн айăпла тесе йышăнтăр-и есĕр?

Раковский. Йышăнтăм.

Вышинский. Есĕр кунта çăвăн пекех тата Крестинский ответнете итлĕр, вăл, суд шăйтине ответлесе, епĕ троцкист мар, терĕ, суд умĕнчи следствире хăй йышăнна преступленисене туман, терĕ. Епĕ сирĕнтен, СССР Союзенче вăртăн майпа троцкисла ĕçсене туса-пына çынсен ĕçри палла представителе тата руководителе пулса тăнăскерген, çакна шăтасшăн: йулашки вăхăтра Крестинский троцкисла ĕçсем туса пыни çинчен есĕр мĕн пĕлетĕр?

Раковский. Крестинский, вăл хай троцкисӑмран уйăрăлнă тесе ӗнентерес шутпа, 1927 çул вĕçенче Троцкий патне çыру йăтăм, çак çырура епĕ хам троцкисла позицисенчен уйăрална тесе çыртам, терĕ. Крестинскин çак çыруне епĕ пелетеп. Троцкий мана çак çырува вуласа пăхма пачĕ. Унăн çыруне Троцкий мана анчах мар вулатаçынă. Çав çырури шухăша çутатаса пама, манăн пер факт çинчен калаçа пама.

Крестинский çав çырува йăричченех темĕçе ерне малтан, Теп Комитетăн вунпиллĕкемĕш сĕвĕс умĕнчи Пленума пулас умĕн, 1927 çулта Мускава тăварăнна чухне, епĕ Берлинра, йăланхи пекех—полпредставра чăрантăм, унта вăл вăхăтра Крестинский ĕçлетчĕ. Манпа пĕрле Каменев пулчĕ. Вăл Римран пычĕ,—Теп Комитет Пленумне хăйтаччĕ. Унчухне Берлинра епĕ, Каменев тата Крестинский, пурте йĕр шухăшлăнсем, пулас Пленумра оппозицин мĕн тумали çинчен канашлăрăмăр. Крестинский Берлинрах йăлчĕ. Вăл малашне те маневăрсем туса пымала, тесе шухăшлатчĕ.

Вышинский. Ураххла каласан, малашне те икĕпитленмелле, тесе калатчĕ-и?

Раковский. Унчухне вăл сăмаха каламанччĕ.

Вышинский. Шухăшĕ. çавах мар-и?

Раковский. Шухăшĕ çавă.

Çăвăн хыççăн кăштах вăхăт иртсен, епĕ Мускавра пултăм, Троцкий мана Крестинскин çыруне кăтартрĕ. Ку вăл 1927 çулти декабрĕн пуçламĕшĕнче пулчĕ.

Вышинский. Çав çырура мĕн çинчен çырнине есĕр астуса илеттĕр-и?

Раковский. Çырура мĕн-мĕн çынни тĕплĕн аса вăйăмастăп, анчах вăл маневр пулса тăни витĕрех вуланчĕ. Епĕ Крестинскин çыруне вуласа тухрăм та, Троцкине: „Крестинский хăйне таса çын пек кăтартма хатĕрленет“, тесе каларăм. Троцкий те çаплах каларĕ. Кайран вăл чăнах та çавăн пек пулчĕ те. ПСК(б)П Теп Комитечĕ, троцкисла шухăшла полпредсенчен—оппозиции руководителĕсене партирен каларасси çине мĕнле пăхатăр, тесе ыйтсан, Крестинский Теп Комитета çыру йăнă, ку çырура вăл хăйне таса çын пек кăтартма çав малтанхи çыру çинчен асăннă.

Вышинский. Троцкисăмран уйăрăлăм тесе Троцки патне йăнă çырупа ĕнентересшĕн пулнă?

Раковский. Çапла, троцкисăмран уйăрăлăм тесе çав çырупа ĕнентересшĕн пулнă. Крестинский Теп Комитета йăнă çырува хасатесене 1928 çулта пичетлесе кăларăр.

Вышинский. Çапла ĕнтĕ, епĕ: Крестинский 1927 çулта тата ун хыççăнхи вăхăтра троцкист пулнă-и, тесе ыйтни çине есĕр мĕнле ответлетĕр?

Раковский. Çапла, Крестинский троцкист пулнă, троцкисăмран ниçан та уйăрăлман.

Вышинский. Апла-тăк айăпланакан Крестинский ĕнер кунта: епĕ троцкист пулман, 1927 çулти нойабрĕнче троцкист пулман, тесе калаçнине есĕр мĕнле хакластăр?

Раковский. Вăл тĕрĕссине каламаст тесе. Суд ирĕк парсан, епĕ Крестинскинчен хăйĕнчен ыйтатăп.

Председатель Уçрăх. Пожалуйста.

Раковский. (Крестинскине). Николай Николаевич, епĕ ссылкара пулнă чухне есĕ ман пата çыру йăтăн-и?

Крестинский. Çапла, Саратăва кайнă хĕрачăран епĕ çыру парса йăтăм.

Вышинский. Айăпланакан Раковский, 1929 çулта, есĕр Саратăвра, ссылкăра пулнă чухне айăпланакан Крестинский сирĕн пата мĕн çинчен çырнине каласа пама ыйтатăп?

Раковский. Крестинский çав çырура мана—есĕ партийе кайăла кĕр, тесе çырчĕ, паллах ĕнтĕ, троцкисла ĕçсене малала туса пыма партийе кĕр, тесе çырнă.

Вышинский. Çапла ĕнтĕ, есĕр хăвăр ссылкăри троцкист пулнă вăхăтра Крестинский сирĕнне çыхăну тытнине палăртрăр?

Раковский. Çапла, вăл, ытти троцкистсем пекех, май хăлнĕ тăран партийе кĕрсе кайса, троцкисла кадрсене сыхласа хăварасшăн пулнă.

Вышинский. Апла-тăк, вăл сире, тактикăшăн кирлине кура, троцкисла ĕçсемшĕн кирлине кура, партийе кайăла кĕме ӳкĕтленĕ?

Раковский. Епĕ çавăн пек анланатăм.

Вышинский. Айăпланакан Крестинский, айăпланакан Раковский сирĕн çырува тĕрĕс анланнă-и?

Крестинский. Тĕрĕс анланнă.

Вышинский. Епĕ судран çакăн çинчен ыйтатăп. Халĕ, епĕ ыйтни тăрăх, Крестинский патĕнче ухтарнă чухне тупнă документсене тĕрĕслесе тухрĕç. Çав документсен хисепĕнче вăл Троцкий патне 1927 çулти нойабрĕрен 27-мĕшĕнче йăнă çырун ӳкерчĕкĕ пур, вăл çыру çинчен ĕнерхи кун Крестинский каларĕ, Раковский те ун çинчен асăнчĕ. Епĕ çав çырун ӳкерчĕкне Раковскине Крестинскине кăтартма тата вĕсенчен çакна ыйтма ирĕк пама ыйтатăп: Троцкий патне йăнă çав çыру çинчен калаçсе-и вĕсем иккĕшĕ те?

(1927 çулти нойабрĕрен 27-мĕшĕнче çырна çырун ӳкерчĕкне Крестинскине, унтан Раковскине кăтартаççĕ).

Крестинский. Ку çав çыру.

Вышинский. Çыру ӳкерчĕкне айăпланакан Раковскине кăтартма ыйтатăп.

Раковский (çырува вуласа). Çапла, епĕ астуна тăрăх, ку çав çыру.

Вышинский. Раковскине 1928 çулти апрелĕн 8-мĕшĕнче тухнă „Экономическая жизнь“ хаçатран çырăн илнине кăтартма ирĕк ыйтатăп,—унта „Крестинский 1928 çулти мартăн 22-мĕшĕнче йăнă çырупа çырса илнă“, тенĕ. Вăл, Крестинский, Троцкий патне çыру йăнă хыççăн, Теп Комитета йăнă çыру çинчен каласа, çав çыру пирки калана-и?

Раковский. Çапла, çавăн пекех çинчен.

Вышинский. Апла-тăк, фактсене пурне те палăртнă. Айăпланакан Раковский, Крестинский Троцкий патне йăнă çырун çак тĕлне астумастăр-и, — ӳкерчĕкре пур вăл. Крестинский çапла çырат: „Ман шутпа, йулашки çурçулталăк хушшинче оппозицин тактики пит йăнăш, оппозицин тĕллевĕсемшĕн сиенлĕ, калама пулать, трагедиллех тĕрĕс мар пулчĕ.“ Çак сăмахсене вуласан, вĕсем троцкисăма сивлени пулаççĕ, тесе калама пулать-и?

Раковский. Çук. Крестинский троцкисла организацийне тăракан çын пек калат. Вăл ĕçсем çине троцкисла пăхат. Вăл троцкисла организаци, троцкисла тĕллевсен интересĕсемшĕн калат.

Вышинский (Крестинскине). Есĕр ĕнтĕ хăвăр троцкисăмран уйăрăлнă тени çинчен Раковский тĕплен каласа панине итлерĕр. Раковский çавăн пек каласа панине терес тесе шутлатăр-и есĕр?

Крестинский. Вăл каланисем тĕрĕс.

Вышинский. Раковский кунта каланисĕм тĕрĕс пулсан, есĕр малала та суда ултăлама, суд умĕнхи следствире есĕр хăвăр кăтартса панисем тĕрĕссине тума шутлатăр-и?

Крестинский. Суд умĕнхи следствире епĕ хам кăтартса панисем пĕтĕмпех тĕрĕс, тесе йышăнатăп.

Вышинский. Апла пулсан, есĕр ĕнерхи кун калани мĕне пĕлтеретха, ăна суд процессĕнче троцкисла провокаци туни пулаç тесе ĕçç хакламала?

Крестинский. Ĕнерхи кун, айăпланакансем ларакан скамйене курнипе, айăплу актине вуласа панă хыççăн шухăша кайнипе—мигнутлăха пит намăс пек туйăнчĕ, хам сывах мар пирки çав туйăм пушшех те пысрĕ,—çавăнпа епĕ тĕрĕссине калаймарăм, епĕ айăпла, тесе калаймарăм.—Чăн епĕ айăпла, тесе калас выранне, апла çалама шухăшламан çĕртенех,—çук, айăпла мар, тесе каларăм.

Вышинский. Апла çалама шухăшламан çĕртенех-и?

Крестинский. Тĕнчери обществă умĕнче тĕрĕссине калама: епĕ пĕрмайах троцкисла кĕрешсе пыни çинчен калама вăй çитмерĕ.

Епĕ судран манăн çăйăваллине çырса хума ыйтатăп: ман çине хунă пит йăвăр айăпсене пурне те епĕ йышăнатăп, изменă тата предательствăсем тунисемшĕн епĕ пĕтĕмпех ответлă.

Вышинский. Айăпланакан Крестинский, урăх ыйтусем памалли халлĕхе манăн çук.

*) Кăскетнĕ стенограмăпа.

Мартӑн 4-мӗшӗнчи ирхи лару

Айӑпланакан Ходжайева допрос тухи *)

Вышинский. Калăр-ха, айăпланакан Ходжайев, есĕр хăвăра мĕнре айăпла тесе йышăнатăр?

Ходжайев. Манăн революцине хирĕç, рабочисене хресченсен государственне хирĕç, партине хирĕç тунă преступленисем 1920 çултанпа пуçланаççĕ. 1920-мĕш çулта манăн çĕнĕ совет государственăн пуçлăхне,—епĕ Бухарă халăх республикĕ çинчен калатăп,—çав республикăн ĕçтăвакан-асли-влаçĕн пуçлăхне лартăм. Çавăнта ĕçленĕ вăхăтра ĕнтĕ буржуала-националисла организацине хутшăнтăм.

Вышинский. Мĕне пĕлтерет вăл?

Ходжайев. Çава вăл „нацилĕ сăвăл“ тенине пĕлтерет, вăл хайĕн умне Бухарă халăх республикинчен буржуала демократиллĕ республикă—Англире Совет Росçиае хушшинчи буферла государствăна туса хурас задача лартăм. Епĕ çав буржуала-националисла организацине кĕтĕм, тата, çав буржуала-националисла организаци активаллă руководителе пулса, унта хутшăнса ĕçлерĕм, унăн контрреволюцилле, совета хирĕçле ĕçне йĕртсе пытăм. Ку пĕрремĕш тапхăр.

1925-мĕш çулта мана Узбекистан Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ туса хуçĕç. 1928 çултан пуçласа, епĕ ĕлĕкхи Туркестан республикĕнчи националисла çыннăсемпе, кайрантарахна вара, Узбекистанра, Узбекистан компартийĕн руководителĕсенчен пĕринпе, Икрамовпа, епĕ хама вăлăн сойузник тупрăм та, унпа епĕр пĕр чăмăр туса ятăмăр. Çав чăмăр вара Узбекистанра националисла совета хирĕçле ĕçе туса пычĕ.

Йӳлашкинчен, виççĕмĕш тапхăр—1930 çул, епĕ пĕрремĕшне Мускава кайсан, Сойуз Халăх Комиссарĕсен Советĕнче Рыковпа ĕçлепĕн курнăçна хыççăн, тĕрлĕ вăтусемпе каласа, епĕ унпа хамăрăн совета хирĕçле ĕçе пĕрле туса пырасси çинчен калаçса тăтăлтăм.

Вышинский. Урăхла каласан?

Ходжайев. Урăхла каласан, сылтăмрисем йĕртсе пынине, партин руководствине хирĕç, совет государственне хирĕç Узбексен национализла организацине пĕрле кĕрешсе пырасси çинчен калаçса тăтăлтăм. Рыков çук чухнех çапла каларĕ мана: пирĕн ĕç пĕрле пулма пуçласан, сылтăмрисен центрĕ Узбекистана никама пăхăнса тăмала мар тăвасса шанаĕ.

Вышинский. Мĕне пĕлтерет вăл—Узбек республикĕн пăхăнманлăхĕ?

Ходжайев. Кунта пăхăнса тăманлăх тенине Совет Союзĕнчен уйăрăм илсе пăхмала, йĕнпле те пулин урăх—капиталисăмла—çĕршыва пăхăнса тăмала тăвасси çине пăхăнăп пек пăхмала.

Вышинский. Есĕр Рыков çалăнине çапла ăнланнă?

Ходжайев. Çапла, епĕ çавăн пек ăнланнă.

Вышинский. Вăл çав ĕçе мĕнле çăлтавланă?

Ходжайев. Çăлтав пĕрре пулнă—сылтăмрисем те тата епĕр те, националиссем, парти руководствине хирĕç, совет правительствине хирĕç кĕрешне. Сылтăмрисем хăйсен тĕллевĕсене туса ситерчĕç тесен, епĕр хамăр тĕллевсене пурнăçа кĕртес тесен, пирĕн çав руководствăна çĕмĕрмеле пулнă. Çав тĕллевпе епĕр союзсем туса çирĕплетрĕмĕр. Çапла вара тĕллев пĕрре пулса йулнă—совет правительствине сирпĕтсе антарасси, ПСК(б)П тĕпкомĕн руководствине сирпĕтсе антарасси пулнă.

Вышинский. ССР Союзне вăйсăрлатса хавшатасси?

Ходжайев. Çапла, ССР Союзне вăйсăрлатса хавшатасси пулнă.

Бухара националисĕсен заговорла организацине 1920 çулхи революцри хыççăн епĕ ăнсăртран кĕмĕн, мĕншĕн тесен, епĕ националис пулса пăхса ӳссе çитĕнмĕ.

Бухарăри буржуала-националисла организацинчисенчен чылайăшĕсем ун чухнех Англи çине кăтартса пана. Паллах ĕнтĕ, çак националисла ĕтемсем Узбекистан Совет Росçийĕне пăхăнса тăманни, Англи çине шанса тăни ăхалех пулса ирттессине тата Англи вĕсене ырă куçсеммĕн кăна пулăшса тăрас çуккине ун чухнех лайăх протекторатне йышăнма май пур тесе шутланă, çав протекторат тăрăх вара Совет Росçийĕнчен пачах уйăрăлма май пулнă тесе шутланă. Çав задачăна пурнăçа кĕртес тĕллевпе епĕр ун чухне чылай ĕçсем туса пытăмăр.

Епĕр советла партин аппаратĕнчен партин чăн членĕсене, советлăн лайăх çыннисене тăтăшах хĕтĕрсе каларса пытăмăр, çав постсене вара хамăр çынсемпе йышăнса пытăмăр. Çакна валăçи епĕр хамăрăн кадрсене, чи малтан буржуази çамрăкĕсенчен хатĕрлесе пытăмăр, вĕсене совет шкулĕсенче вĕрентмерĕмĕр, пуринчен ытла йӳтçĕршывсене—Германине, Турине вĕрентмĕ вăтăмăр.

Çакăнпа пĕрлех епĕр тата хĕçпăналла вăйсене организацилес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса пытăмăр, мĕншĕн тесен çарта пирĕн хыççăн пыракансем сахал пулна. Епĕр çавăрăн хĕçпăналла вăйсене пуринчен ытла милици йĕвĕрлĕе туса формăларăмăр. Епĕр басмачествăна уçă курма тăрăнна, çав вăхăт телне басмачсем Бухарă территорине курăнкала пуçланă та ĕнтĕ. Епĕр басмачсен çене кадрĕсене тума тăрăшрăмăр.

Малашне, 1924—25-мĕш çулсенче Вăтам Азири Совет республикĕсене нацилĕ территори йĕнчен уйăрса пăйлас мăшăру лартсан, епĕ çавна хирĕç пултăм. Анчах панисене уйăрса пăйласшине хирĕç ӳççăн тăнă пулсан, епĕ хам ӳçă тăшман пулнине пĕлтерне пулăттăм, епĕ ун пек-тума шутламарăм. Ак мĕншĕн епĕ нацисене пĕр-пĕринчен территорисене уйăрасшăн тăнă пек пулса Узбек Совет государствин пуçлăхĕ пулса тăтăм.

Вышинский. Çапла ĕнтĕ, майлаштартăр?

Ходжайев. Май килтертĕмĕр, икĕпитлентĕмĕр.

Узбек парторганизацинче „группа 18“ текен ушкăн пурри паллă пулнă. Çав ушкăна организацилекенни епĕ пулнă. Узбекистанри халăхсен чухăн-сийĕсене тӳпе тарăх çĕр касса парас шутпа çĕр реформине туса иртерсен, çав вăхăтра кулаксен-байсен сийĕ самăйах вăйланчĕ. Кунсăр пуçне, Узбекистанри ответлă работниксен пĕр пайĕ çав реформăна килĕшмен пулнă. Епĕ вĕсен килĕшменлĕхĕне усă курса Узбек нацианалисĕсен ушкăнне туса йĕркеле тытăнтăм.

Вышинский. Ку хăш çулта?

Ходжайев. Ку вăл 1925-мĕш çул варринче. Епĕр хамăрăн ĕçри ун чухне Узбекистан компартинруководителĕсенчен пĕрин çине—Икрамов çине шанна, мĕншĕн тесен, епĕр вăл 1918-мĕшĕне 20-мĕш çулсенче, хăй çамрăк çын пулнă вăхăтра, Туркменистанри буржуала-националисла организацисенче хутшăнса ĕçлеме пĕлнĕ.

Вышинский. Мĕнле организаци-сенче?

Ходжайев. Ку вăл пантӳркла организаци пулнă. Ăна Рыскулов йĕртсе пынă. Анчах та сĕçера пире çапса хӳрĕç. Çакăн хыççăн епĕр тата тарăнрах пытанса ĕçлеме шут тытрăмăр, епĕр йăнашпăмăр, тĕрĕс мар турăмăр, епĕр партин лини тăрăх ĕçлесе пыма пулатпăр, тесе хăйăлăни патăмăр.

Вышинский. Иккĕмĕш хут майлаштартăр, маневăр турăр?

Ходжайев. Иккĕмĕш хут икĕпитлентĕмĕр. 1925—1928-мĕш çулсем-хушшинче практикăла ĕç пĕнĕпе Икрамовпа сывхартăм. Икрамов Тĕлкомра ĕçленĕ, епĕ—Халăх Комиссарĕсен Советĕнче. Унпа сывхăнса ĕçлени мана Икрамовăн хăйĕн националисла ушкăн пуррине пĕлме май пачĕ. Вăл ушкăн пачĕ „Милли истиклял“, урăхла каласан, „нацилĕ пăхăнманлăх“ тенине пĕлтерет. Епĕр унпа пĕрлешпĕ, кăна мар, тата хамăр ĕçе пĕрле туса пыма пуçларăмăр.

Вышинский (Икрамова). Айăпланакан Икрамов, 1928-мĕш çулта есĕр вăртăнла националисла организацин членĕ пулна-и?

Икрамов. Пулнă.

Вышинский. Вăл организаци „Милли истиклял“ ятлă пулнă?

Икрамов. Çапла Бухарин хĕсненипе тата Антипов тӳрĕмĕн йĕртсе пынипе епĕр икĕ националисла организацин ĕçне пĕрлештертĕмĕр.

Ходжайев. Епĕ хам катартса панассин пысăк пайĕ çине куçатăп, вăл ĕçсем 1928-мĕш çул тĕлне, урăхла каласан, пĕрремĕш пăтителĕкĕ планне туса тĕрĕслеме тата хатĕрлеме тытăннă вăхăта тивеççĕ. Епĕ пĕлместĕп, суда паллă-ши: буржуала-националисем, уйрăмах Вăтам Азире, çакăн пек теори пулнă: хăй тăр пĕччен тытăнса тараканах хуçалăх организацилемелле, урăхла каласан, республика хуçалăхне Сойузри ытти республикăсенчен уйăрăлмелле, республика хуçалăхне Сойузри ытти республикăсенчен уйăрăлмелле, вĕсене пăхăнса тăмасăр аталанса пыракан хуçалăх тумала пулнă. Ак ĕнтĕ, çак теорине епĕр пурнăçа кĕртнĕ, тепĕр майла каласан, епĕр пĕрремĕш пăтителĕкĕ планне турăмăр, вăл Сойузри правительствăн катартăвĕсене хирĕç пыракан тата нацианалиссен катартăвĕсемне килешӳлĕн тунă пăтителĕкĕ пулнă. Епĕр хуçалăх планне, хуçалăхран

*) Кăскетнĕ стенограмăпа.

(Йӳлашки 4-мӗш страницӑра).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Мартăн 4-мĕшĕнчи ирхи лару

Айăпланакан Ходжайева допрос туни

(Йулашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра)

сахалтарах çĕр мамăкĕ туса илес тĕллевпе турăмăр.

Ку плана Мускавра пăхса тухнă пулнă. Сталин пуçарнине çĕр мамăк акса-тăвас программăна çĕнĕрен пăхса тухма шăтну хăртнă. Ака ентĕ, ПСК(б)П Тĕнкомĕн тата правительствăн çак çĕнĕрен катартса панине çĕмĕрех шутна, çĕр мамăкĕ памала мар тăвас тесе, епĕр çĕнĕ илле, вĕрçĕ хăвартăн план, ПСК(б)П Тĕнкомĕне правительствă катартса панинчен чылай пысаклатса турăмăр. Епĕр мăнкуçтурă теорине, урăхла калаçан, йăлхуçалăхĕне пĕр куçтурă кана, пуç пулса тăракан куçтурана çĕр мамăкĕ кана акмала тесен, теорине пурнăçа кĕртсе пытăмăр. Çакна тăвас тесен пусуçаварăнăшĕне çĕмĕрмелеç, аркатмала пулнă, çаранлăхсене, урăхла калаçан, çĕлевера; кураçмене пĕтересе çартмала, искусственăл шăваракпа тăпра çинчен тулăна, урăпа кана мар, тата çакăнпек куçтурăна та—риса та хĕссĕ калармала пулна. Çапла туни хăйăха пысăкăн тăрăхтармала тапассине пĕлтерĕ, мĕншĕн тесен, епĕр ĕç çакăн пек пулаç тесе шутлана: плана—Мускавра туй, епĕр Мускав приказчикĕсем кана пулса тăратăр, епĕр Мускав пана кăтартусене пурнăçа кĕртсе пыраттăр—унпа „килĕшместĕр? акă Мускав сине жалабă парăр“. Çавăн пек задача епĕр çартрăмăр.

Епĕр çапла планлăрăмăр: калăпăр, Ферганра—çĕр мамăкĕ тĕлĕнпе Совет Союзĕн тĕп база пулса тăракан вырăна, Бухарара—ун чухне вăл иккĕмĕш база пулнă, çĕр мамăкĕ акса тăвасси 96—98' процента çитрĕ. Хресченĕн вунă гектар çĕр пур пулсан, унăн 8 гектăрĕ 9 гектар чухлĕ çĕр мамăкĕ акмала. Хăварах пĕлетĕр, ытти куçтурăсене акма пĕр гектар çĕр кăна йулсан, вара ун пек хуçалăх пĕтсе пыма пуçлаç.

Çакна пирĕн организаци, епĕ йĕртсе пынине, Икрамов йĕртсе пынине, пĕлсе тăрсах, йăрăлех туна.

Вышинский. Айăпланакан Икрамов, çакăн пек анлантарса панисем тĕлĕпше есĕр мĕн калама пултаратăр?

Икрамов. Епĕ вĕсене йăлтах çирĕплететĕп. Епĕ тата ун çумне çĕнĕрен хушас тетĕп. Ку ĕçре пирĕн соцзыниксем (каласса татăлни пулман, анчах ним шарласа тăмасăрах килĕшнĕ) троцкисем пулнă.

Председатель Уçрих. Айăпланакан Ходжайев, малала каласа парăр.

Ходжайев. Виççĕмĕш танăхăр çине куçатăп. Епĕ пуçламĕшĕнче калаçа патăм, 1930-мĕш çултан пуç лаçа есĕ сылтăмăрсемпе, вĕсенчен пĕринпе—Рыковпа сыхăнтăм.

Ку вăл 1930-мĕш çулта, пĕрремĕхине официалă ĕçсем тăрăх вышăнуну туна вăхăтра пулнă.

Епĕр хамăр ĕçĕн меточĕсем тĕлĕпше калаçса татăлтăмăр. Малтанлăха Рыков мана çакăн пек кăтартусем панă: пĕрремĕшĕнчен, сăтăрла ĕç, пурнăчĕн ытла ана йăлхуçалăхĕнче туса пымала. Иккĕмĕш—пĕрлештерме май пур оппозицине ушкăнсене тата вăйсене, мĕнлисем тупăнаççĕ, пурне те пĕрлештермелех те, вара сăтăрла ĕçе, провокацине ĕç меточĕсене активлатса, çав вăйсене ПСК(б) Партин руководствине хирĕç йăнăлă.

Рыков кăтартăк панине пурнăçа кĕртсе пăрахас шутпа епĕр çав сăтăрла ĕçе туса пыма тытăнтăмăр.

1933 çулта Узбекистана Бухарин пычĕ. Икрамов сăмахăсенчен епĕ Бухарина Икрамов мĕн çинчен калаçнине пĕлетĕп тата Бухарин пирĕн национализма организацине мĕнле кăтартусем парса хаварнине те пĕлетĕп.

1934-мĕш çулта Узбекистана Антипов пычĕ. Антипов мана тăрă мĕнех сăтăрла ĕçе, диверçине ĕçе активлатма кăтартусем панă.

1936-мĕш çулта Ташкента Бухарин пычĕ. Ку вăл 1936 çулхи август уйăхĕнче пулна. Бухарин манран сылтăмăрсен центрĕ пана кăтартусене епĕр мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Епĕ ана сăтăрла ĕçен пысак пландисем çинчен каласа патăм. Анчах та манăн информаци Бухаринăн сителенкĕ пулмарĕ. Епĕр сăтăрла ĕçе тата совета хирĕçле ĕçе паян туса пынишĕн мар вăл кăмăлăр пулчĕ, Бухарин çакăн пирки камăлăр пулна: пĕрремĕшĕнчен, ку вăхăта повстанчески кадрсем çук пулна, иккĕмĕшĕнчен туса йĕркелене террорла ушкăнсем çук пулнă, виççĕмĕшĕнчен епĕр тата ун чухне Англипе сыхăнман пулнă. Çак виçĕ йăнала Бухарина тарахтарчĕ.

Бухарин çапла каласа пачĕ: фашиспа Германипе килĕшӳ тума пур, тата Японпине килĕшӳ тума палăртса хунă пур. Анчах, сăмах Вăтам Азири республикăсем çинчен шырăп пулсан, ун çывăх та чи хăватлă çĕршыв вăл—Англи пулса тăрать. Унпа калаçса татăлмала та. Епĕр, сылтăмирсем, хамăр йĕнчен çав ĕçе хутшăнăнăр, анчах есĕр чикĕрей çывăх тăратăр, çирĕн хăвăрăн унпа сыхăну тумала,—терĕ.

Вышинский. Мĕнле чикĕрен сывăх?

Ходжайев. Афганистанпа. Унта Англи представителĕ пур. Бухарин çапла каларĕ: сăмах капиталисăмла çĕршывсенчен пулăшу кĕтесси çинчен шырăп пулсан, пирĕн, сылтăмирсен, çирĕн те çаплах, вăлаçа илес, ĕçре—хăвăра никама пăхăнса тăмала мар тăвас ĕçре, мĕн те пулин памала пулаç пулать, мĕн те пулин памала пулаç.

Вышинский. Мĕн памала? Мĕн пама пулмала?

Ходжайев. Çакă: вăл—Англи протектораченне йышăнмала тенине пĕлтерет, ку вăл минимум. Епĕ экономикала йăналаçем çинчен калаçнă та, мĕншĕн тесен вĕсем ăхалех палăл. Узбекистан—пилĕк мĕлйунăл халăхпа икĕ калама çук пысăк государствăсем хушшинче; пĕр ĕнчен—Совет Союзĕ, тепĕр ĕнчен—Англи хушшинче тăрса никама пăхăнса тăман государствă пулма пултарайманăст. Хăш çынран хĕрринче тулсан çынçăнас пулаç. Пĕр çыран хĕрринчен тухса кайсан, тепĕр çыран хĕррине пырса перĕ-тĕкĕнĕ. Бухарин капиталисăм стабинизацийĕ çинчен каларĕ, тата çав ĕçре фашисăм, уйрăмах нимĕç фашисăмĕ пысăк вырăн йышăнни çинчен каларĕ.

Вышинский. Фашисăма мухтарĕ?

Ходжайев. Епĕ ăна фашисăмпа мухтаса ырланă пек анланатăп. Вăл çапла каларĕ: фашисла Германи хаçлăх вăхăтра Германине Европă гегемонĕ тăвас тĕлĕпше ĕçлет, çав ĕçе тумали метод Германишĕн пĕтĕм Европăна фашисларта ситересси пулаç, çав май Азири пысăк государствăсене, сăмахран, Японине, пĕр-пĕринпе килĕшӳ тума хатĕрленеççĕ, паллах, ССР Союзне хирĕç кĕрешме фашисла Германине Японии иккĕшĕ пĕрле килĕшӳ тăвĕç,—тесе пĕлтерчĕ. Çакăнтан вăл çапла вывод турĕ: пирĕн задачă хамăрăн контрревоăнăшĕе вăйсене активлатмасси пулаç. Икрамов ун чухне Ташкентра çукчĕ. Икрамов килсен, епĕ ăна Бухаринпа калаçни çинчен пĕлтертĕм, мĕншĕн тесен епĕ Бухарина хам та тата Икрамов йăнăпе те епĕр вăл кăтартса панисене пурнăçа кĕртме пулни çинчен шантартăм, вĕсене епĕр пурнăçа кĕртме тытăнтăмăр та.

Халĕ ентĕ хамăн конкретлă сăтăрла ĕç çине куçатăп.

Йăлхуçалăхĕне пирĕн сăтăрла ĕç пусуçаварăнăшĕсене пăтраштарасси пулнă. Епĕр ана пĕрремĕшне иккĕмĕш пăтителĕкăсем хушшинче пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пирĕн задача—вăрлăх хатĕрлес ĕçе арпаштарса йăрасси пулнă. Ку задăчăна епĕр пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пирĕн задача администраци йĕнĕпе, перегибсем тупине хресченсене—çарăхтарасси пулнă.

Унтан пире вылăх-чĕрлĕх хисеппе сахалтатас тĕлĕшпе самайах сийĕн кӳме май пулчĕ. Пĕр конкретла примĕр ĕç илсе кăтартас тетĕп. 1936 çул хушшинче, партипе правительствăн решенийĕ тăрăх, колхозниксене пирĕн парусем, çурăксем тата ытти вылăхсене те пурĕ 130 пин пус памалаччĕ. Епĕр вĕсене пĕр çул хушшинче парса тухрăмăр. Анчах 1936 çулăн иккĕмĕш çурçулăхĕнче тата 1937 çулăн пĕрремĕш çурçулăхĕнче вылăхсене шута илсе пăхсан, çака курăнчĕ: çав 130 пин пус вылăхран куç умĕнче 30—40 пин йăхăн ĕç тăрса йулнă. Епĕ çамрăк вылăхсем тĕлĕпше калатăп. Ытти сăмах çинчен, çав вылăхсенчен пĕр пайĕ хресченсене пачах та тивмен. Мĕншĕн тесен пирĕн районсенче тата округ енче ĕçлекенсем çав пăрусемпе сурăхсене хăйсем валеçе илнĕ, кайран вĕсене пусса çинĕ тата сутнă. Иккĕмĕшĕнчен, колхозсене самрăк вылăхсене сыхăма усрас ĕçе кирлĕ пек туман пулнă. Пурăнăн туса илес йĕнене епĕр çакăн пек сăтăрла ĕçсем туса пытăмăр: 1928-мĕш çулта пирĕн 7—8 пин тонна йăхăн чĕр пурçăн пулнă пулсан, хаçлăхи вăхăтра 10—12 пин тонна пур. Анчах та, Узбекистан, лайăх шутласа пăхнă тăрăх, 22—23 пин тонна йăхăн пурçăн пама пултарать. Пĕр ĕçе туман пулсан, çав хисепне илме май пулнă. Йăлхуçалăхне механизацилени, урăхла каласан, тракторсем, машинăсем кĕртни суда палăлă ĕнтĕ, анчах пирĕн çĕр участкисем чысăкăс мар, чавса пĕтернĕ — участкăсене шăварма каналсем тунă. Узбекистана кашни канал хĕррине пурçăн хурчĕ тăранса пурăнмали йăваç лартса тухнă. Çапла вара, епĕр, йăлхуçалăхне механизацилеме май çук, йăлхуçалăхне, ăçта пысăкрах çĕр участки çук çĕртĕ; трактор кĕртме йурамасăт, апла усăла пулмасăт, вăл сиенлĕ пулаç тесе, механизаци сăлтавĕне епĕр пурçăн хурчĕ çимĕç илсе тăракан йăваçсене вунă процента çити касса тăкрăмăр, çапла тунипе епĕр пурçăн базине пĕтерсе хутăмăр. Пурçăн йăваççисене касма чаракан етемсене епĕр: „есĕ механизацине хирĕç, есĕ парти политикине хирĕç?. Апла пулсан, есĕ оппортунис, сана пĕсĕртмелех“, тесе пĕсĕртрĕмĕр.

Епĕ ăслерçи çинчен каламасăтăп та, вăл çĕр мамăкĕне пĕрле пырăт тата пусуçаварăнăшĕнче тĕп куçтурăсенчен пĕри пулса тăрать. Ăслерçисем хăйăлтах сăтăрла пĕтерĕç лартрăмăр. Ана йăлашки икĕ çул хушшинче кана ПСК(б)П Тĕнкомĕ тĕрĕмĕн хĕснипе акма пуçланă. Йăлашки вăхăтра епĕр кашни ернерех Сталин алă пусна: „Мĕншĕн ăслерçи йăлса пырать? Ана мĕншĕн ăçмастăр?“ текен телеграммăсем илтĕмĕр. Çапла хĕснипе кана епĕр ăслерçи тĕлĕшпе ĕçе тĕрлетме тытăнтăмăр.

Епĕ йăлхуçалăх йĕнĕпе тунă мтти сăтăрла ĕçсем çинчен каламастăп та.

Епĕ тата ирригаци йĕнĕпе тунă икĕ диверçилĕ акт çинчен калама манинă. Пĕрремĕш акт вăл—Раватхадже патĕнчи пĕве тĕлĕшĕпе. Ана совет власĕ пĕвелесе панă, вăл Зерабшан йăтлă йăхăншыван хирсене шăварма шыв парса тăрать. 1936 çул ăçланмĕшĕнче çав пĕвене çĕмĕрсе тата пăсас шутпа пирĕн организацин членĕ Халбатыров диверçине акт тума хатĕрленчĕ. Анчах та унăн çав ĕçе тăвасси пулмарĕ, мĕншĕн тесĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем ана хăйне те тата ăна пулăшакансене те çинĕнчех тытса арĕслерĕç.

Çавăн йĕнĕрлех тепĕр диверçипе акта Ферганра пысăк пăве çинче, Ферган хирĕсене çуррине йăхăн шăварса тăракан пĕве çинче тума хатĕрленĕ. Анчах ăна та пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртесси пулаймарĕ, палăлах пулаç, Узбек шывхозĕн начальникĕ пулса ĕçлекен, пирĕн организацин членĕ Рахманов ку акта каштах пурнăçа кĕртнĕ.

Промышленнăç çинчен калас пулсан, мана Чирчикгройра сăтăрлă ĕç туни палăлă пулса тăрать. Строителĕсем начальникĕ пулса Розит ĕçленĕ. Вăл ĕлĕк те халĕ те сылтăмирсен шутĕнче пулнă. Розит унта сăтăрла ĕç туса пыни мана та; Икрамова та тата пирĕн организацин ытти членĕсене те палăлă пулнă.

Иккĕмĕш вăл—Кувасайскри гидроелектростанци—пысăк елек тростанци, ăна Ферган патĕнче тăвассĕ. Вăл 48—50 пин киловаттăлă пулмала тата вăл Ферганри пĕтĕм промышленнăçа электроенерги парса тăмала. Çав электростанцин строителĕсем пиртĕ вăрама тăсăлчĕ. Çакă ахаль пулман.

Çакăн пек сăтăрла актсене Бухарăра, Самарканда тата ытти вырăнсенче те чылай туса пынă.

Вышинский. Кӳкĕрт рудникĕ сем тата?

Ходжайев. Кӳкĕрт рудникĕ хăй тĕлĕн мар, пушар пулнине мар стройран тухнă; вăл çакăншăн стройран тухнă: унта троцкис Невский, ăна унта Пăатаков йăнă пулнă, пушар тунă тата тĕрлĕ газемпе рудникне ишĕлтерсе антарнă. Невскине сийĕнчех арĕслемелех пулнă. Ана арĕслес вырăнне епĕр Мускавпа пĕр-пĕринне çырусем çырса йăрса хăтлантăмăр, кам та пулин унăн хутне кĕркен пулĕ, тесе шантăмăр. Анчах пурăна ăна Невскине пур пĕрех арĕслерĕç.

Ытти кăтартусене пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕпше—Узбекистанра повстанчески ушкăнсем тавасси çинчен, епĕр çав ĕçе тĕрĕмĕнех хамăр организацилеме хăрарăмăр, мĕншĕн тесен çак ĕçе тĕрех шăршăласа пăхма пултарнă пулĕччĕç. Çавăн пирки те Икрамовпа канаплана хыçсăн, епĕр унпа пĕрле çакăнсем секретарĕсен составĕнче тата ĕçтăвкомсенче ĕçлекен çынсăра майлă етемсене, вĕсем повстанчествăй ушкăнĕсене массăлăн туса пыма пултаракан чăмăр организацилеме хатĕрленчĕр тесе, епĕр вĕсене сăмах вĕççĕн кăтартусем патăмăр.

Тепĕр кăтарту вăл амнистине ирĕке кăларна басмасченчен, 1922—23 çулсенчех парăннăскерсенчен, кишлаксемпе йăлсенче ушкăн туса хатĕрлесси çинчен пулнă. Çавăн пек пулнă кăтартусем. Вырăнсенче çак ĕçе туса пынă, урăхла каласан, çынсене хăйсем тавра йăваççарнă, çав ушкăнсем пулса пынă. Террорла ушкăнсем тĕлĕпше илсен, ун çинчен епĕ икĕ çынна каласа панисĕр пуçне, урăх никама та пĕлтермен. Епĕ хам пĕлнĕ, Икрамов пĕлнĕ тата тепĕр Шермухамедов тенĕскер пĕлнĕ, ăна епĕ, Икрамовна каласа татăлса, çав террорла ушкăнсене организацилессине тума хушрăм.

Йăлашкинчен, ку йăлашки пункт, вăл—Англипе сыхăнасси тĕлĕпше. Епĕ хам тăр пĕччен Англипе сыхăну тума пултарайман. Ăна тума мĕнле те пулин урăх майсем шырамала пулнă. Ун пек етемсене епĕ Таджикистанра туйма пултарнă.

Вышинский. Басмачсем урла?

Ходжайев. Курбашсем урла, урăхла калаçан, басмачсен началăхĕсем урлă. Курбаш вăл басмачсен чăн началăхĕнĕ пулсан, англичансемпе сыхăнмасăр тăма пултараймасăт, мĕншĕн тесен, басмачсене англичансем хутшăннине организацилеме.

Вышинский. Калăр-ха, хăвăр пурнăçу тăрăх мĕнле общественăла сиплес шутланатăр?

Ходжайев. Епĕ кунпа семйинчен.

Вышинский. Аçу кам пулнă?

Ходжайев. Сутă тăвакан?

Вышинский. Пысăкки. печĕкки?

Ходжайев. Пысăкки. Каракулĕне сутă тунă, 1912 çулта вилнĕ.

Вышинский. Есĕр хăвăрăн ирттернĕ пурнăçу йĕнĕпе буржуала етемсемпе сыхăну тытнă-и?

Ходжайев. Çапла.

Вышинский. Есĕр Узбекистанра сăтăрла ĕçе йĕртсе пыма пуçласан, каракулĕ текен выльăхсене ĕрчетес ĕç йĕнĕпе сăтăрла ĕç туса пыма тӳр килчĕ-и?

Ходжайев. Çапла.

Вышинский. Революциччен мĕнле организацинче тăнă есĕр?

Ходжайев. Епĕ тăна организацин вăл—Бухарă либералĕсен партийĕ, конституцилĕ-монарх ипле партипе пулаç.

Вышинский Кадетла?

Ходжайев. Çапла. 1917-мĕш çулта, епĕ çав партирен пăрăнна хыçăн, ентĕ епĕ урăх партине организацилекенсен шутĕнче—çамрăк-бухарă партийĕ тес: йат пана партине организацилекенсен шутĕнче пултăм. Вăл партин программине епĕр 1917 çулта пичетлесе кăлартăмăр. Хамăр умма епĕр Бухарă республикине буржуала-националиста аталанса пымала задача лартрăмăр. Епĕ çав партинче тăтăм.

Вышинский. Кайран каллех национализмсене пĕрлешĕр?

Ходжайев. Кайран, епĕ власъпусе пуçа тăрсан, епĕ каллех националиссем сумне хутшăнтăм.

Вышинский. Çав вăхăтран вара вăл линийе тытса пыма?

Ходжайев. Çавăнтан вара çав линийе тытса пытăм.

Вышинский. Сире Бухарин пулăшнă?

Ходжайев. Епĕ çавăн çинчен калатăп та.

Вышинский. Абид Саидова вĕлерни çинчен мĕн паллă сире?

Ходжайев. Ун çинчен епĕ 1931 çулта илтрĕм.

Вышинский. Мĕншĕн вĕлернĕ пулнă ана?

Ходжайев. „Милли истиклял“ текен националиссла организаци йышăннипе ăна хăйĕн пичĕшĕ вĕлерĕç...

Вышинский. Унта кам хутшăнна?

Ходжайев. Унта Икрамов хутшăнна.

Вышинский. Айăпланакан Икрамов, Абид Саидова вĕлернĕ факт пулнă-и?

Икрамов. Ун пек факт пулнă.

Вышинский. Абид Саидова мĕншĕн вĕлернĕ пулнă?

Икрамов. Буржуала-националиссене тăрă шыв çине кăларса палăртнăшăн.

Вышинский. Абид Саидова вĕлернине çирĕн етем текенни пулнă?

Икрамов. Çапла.

Вышинский. Апла пулсан, Абид Саидова Бату вĕлерне—сирĕн етем вĕлернĕ?

Икрамов. Çапла.

Процесс дневникĕ

Мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи лару

ССРС Верховнăй Судĕн Çар Коллегийĕ ирхи ларувĕнче айăпланакан Бухарина малала допрос тăвассĕ.

Бухарин малтанхи пекех паркалаçлă, государствăна ĕнчен айăпланаканĕ паракан ыйтусем çине тӳрĕ-тĕрĕс ответлессинчен, çивчĕ вырăнсенчен парăнса кайăт, минутсеренех вăрăм айăлтарнурăлă сăмахсем калаç.

Анчах прокурор йăнăлă бандитăн преступленийĕсене пĕрин хыçăн тепĕрне тăрă шыв çине каларса пырать, вара Бухарин, ыйтусемпе хĕстернĕскер, хăй туна хăрушăла ирсĕр усал ĕçсене чылайăшне йышăнать.

Бухарина туна допрос çирĕплетсе пана тĕп итог вăл çака: Бухарин „сылтăмла-троцкисла блокăн“ активлă руководителĕ пулнă, шпионаж, диверсипе, сăтăрлă ĕçсем тăвассине тӳрĕмех хăй организацилесе ыраканĕ пулнă.

Бухарин—кулакла восстанисен организаторĕ, ку тĕлĕшпе вăл тӳрĕмех ĕçленĕ. Çав ĕçе тума вăл хăйĕн подручнăйне Слепкова, контрревоăнăшĕе ĕçсĕн квалификацилĕ мастăрне, Çурçĕрти Кавказа ăна. Çав ĕçе тума вăл ирсĕр Иваковенкона Çĕпĕре йăнă, Бухарин кăтартурĕ тăрăх, Слепков Пиковаров урлă контрревоăнăшĕе казак союзĕн пуçлăхĕсемпе сыхăннă, вĕсем урлă вара йытăçăршыва тарса кайнă, шургвардейца-казаксен ушкăнĕсемпе сыхăннă.

Бухаринăн подручнăйĕ шпион Карахан совета хирĕçле заговорщикĕсене пулăшу парасси çинчен нимĕç фашисĕсемпе калаçусем иртернĕ. Бухарин унăн çав пусарунеле ырлана. Çак Бухарин ентĕ, епĕ руководства „проблематикине“ çеç ĕçленĕ текенскер, совет çĕршывĕпе сутă тунă, фашисла пулăшуçăн нимĕçсене совет Украинине пама пулнă.

Белоруссири национал-фашисла организаци урлă „сылтăмла-троцкисла блок“ тата унăн руководителĕ Бухарин Поļша разведкине. Поļшăн генеральнăй штабĕне сыхăнаççĕ. Бухаринпа Рыков сунаçем-айĕнче Шарангович, Голодед, Червйаков пек чи хăйăр та усăллă шпионсем хăйсен ирсĕр ĕçне тăваççĕ. Бухарин, Рыков вĕсен ĕçĕсене йĕртсе пыраççĕ, Поļша разведкин заданисене пурнăçа кĕртеççĕ. Совет Союзĕн хĕвеланăçĕнчи форпосчен обороначĕ тĕрекне—Белорусь ССР-ĕн тĕрекне çĕмĕрме тăрăшаççĕ. Айăпланакан хăй йышăнна тăрăх, вĕсемне паналла Поļша хушшинчи сыхăну тĕлĕнмелех тарăна кĕрсе кайнă: „сылтăмла-троцкисла блокри“ заговорщикĕсем Белоруссири ответла выраннсене çĕнĕ сыхăсем лартаççи çинчи Поļшăн... разведкине килештереççĕ. Блока пулăшу панăшăн Бухарина унăн сывăх йыттисем, хăйсем власа алăла илес-мĕн пулаçан, Поļша паненсене совет Белоруссине пама пулаççĕ.

Совет власне хирĕç кĕрешес ĕç интересĕсеммĕн пĕтĕм контрревоăнăшĕе вăйсемпе пĕрлешесси—ак çак пулăт ĕнтĕ Бухарин пуçăа кĕртсе пыракан сулăр. Вăл Семенов есаул урлă, Совет Союзĕнче çĕмĕрсе такăна есерла партин йулашкисемпе, йуть çĕршывĕн есерçисемпе сыхăнатăр. Есерсем блока пурнăçу йĕнĕпе буржуала етемсемпе сыхăну тытнă-и?

Ходжайев. Çапла.

Вышинский. Есĕр Узбекистанра сăтăрла ĕçе йĕртсе пыма пуçласан, каракулĕ текен выльăхсене ĕрчетес ĕç туса пыма тӳр килчĕ-и?

Ходжайев. Çапла.

Вышинский. Революциччен мĕнле организацинче тăнă есĕр?

Ходжайев. Епĕ тăна организацин вăл—Бухарă либералĕсен партийĕ, конституцилĕ-монарх ипле парти пулаç.

Вышинский Кадетла?

Ходжайев. Çапла. 1917-мĕш çулта, епĕ çав партирен пăрăнна хыçăн, ентĕ епĕ урăх партине организацилекенсен шутĕнче—çамрăк-бухарă партийĕ тес: йат пана партине организацилекенсен шутĕнче пултăм. Вăл партин программине епĕр 1917 çулта пичетлесе кăлартăмăр. Хамăр умма епĕр Бухарă республикине буржуала-националиста аталанса пымала задача лартрăмăр. Епĕ çав партинче тăтăм.

Вышинский. Кайран каллех национализмсене пĕрлешĕр?

Ходжайев. Кайран, епĕ власъпусе пуçа тăрсан, епĕ каллех националиссем сумне хутшăнтăм.

Вышинский. Çав вăхăтран вара вăл линийе тытса пыма?

Ходжайев. Çавăнтан вара çав линийе тытса пытăм.

Ирхи лару иĕçĕнче Вышинский йулташ Белостоцкий тухтăр каласа панине—сылтăмла-троцкисла бандă Максим Горькине тискерĕн вĕлернин хăшпĕр обстоятелствисем çинчен каласа панине вуласа парать, вăл каласа панине ĕç сумне пĕрлештерме шутать. Вышинский йулташ М. Й. Белостоцкий тухтăра свидетел пулма чĕнсе илесси çинчен, ăслăлăхан тава тивĕçле деятеле Н. А. Шершавский профессора, ăслăлăхан тава тивĕçле деятеле Д. А. Бурмин профессора, В. Н. Виноградов профессора тата медицинăй ăслăлăхĕсен докторне В. Д. Зипалова медицинăй експерчĕсем пулма чĕнсе илесси çинчен сут умĕнче шутать.

Суд прокурор ыйтăнне йышăнмала тăвать. Çакăнпа вара ирхи лару пĕтет.

(ТАСС).

—•ООО•—

Лайăх ĕçлекен акушеркă

ТУРХАН. Шурут болъницинче ĕçлекен Й. Герасимова акушеркă хăй ĕçне йуратать. Болъницăна пыма пултарайман хĕрарăмсем патне килесене сӳрет. Вăл ĕçлеме киличчен çĕр болъницăна ача çуратма уйăхра тата 4—5 хĕрарăм ĕç пынă пулсан, халĕ кашни уйăхрах 20—25 хĕрарăм пыраççĕ.

В. Иванов.

—o—

ХРОНИКĂ

— Пĕтĕм Российă Тепĕстăвкомĕ И. Г. **Кабанов** йулташа тата И. А. **Бенедиктов** йулташа РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ заместителне лартнă.

— Пĕтĕм Российă Тепĕстăвкомĕ П. А. **Светлов** йулташа РСФСР Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарне лартнă.

(ТАСС).

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче

Мартăн 9-мĕшĕнче

Чăвашла спектакль

М. ГОРЬКИЙ

„НА ДНЕ“

(4 пайăлă)

Художествăй руководителĕ йе. А. ТОЙМАКОВ лартать.

Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.

Шупашкарти кирпĕч заводне *ПЛАНОВИК-ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ*

Хватер пур. Ĕçукçи килешӳ тăрăх. Çавнашкалах сезонлă тата йăлан ĕçлеме *РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ*

Общежитире пур.

3—1. Дирекци.

Шупашкарти сасăлă кино-театрта

Мартăн 9—10-мĕшĕнче

Пăхăр та итлĕр!

Сасăлă, сĕнĕ, документлă фильм

ЛЕНИН

Кассă 2 сехетрен уçă.

Сеанссем 6, 7 с. 40 мин., 9 с. 20 мин. пуçланаççĕ.

ФОЙЕРЕ

7 сехетрен пуçласа академи театрĕнчи артиссемпе Чăваш филармонийĕнче художествăлă номĕрсем выльăха параççĕ.

„Чăваш Коммунĕ“ сыпăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 119. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваш полиграфтреста Заказ № 197 Тираж 15.500 25—94 ф. б. 1—1 п. л.